26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
ФЕВРАЛЬ
16
ЮНКУН
33(6528) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

1944-мĕш ялхуçалăх çулĕнчи çĕнĕ çитĕнӳсемшĕн

Паян Шупашкарта республикăри ялхуçалăхĕнче малта пыракансен канашлăвĕ уçăлать. Вăл иртнĕ ялхуçалăх çулĕнчи ĕçсен итогĕсене пăхса тухĕ тата кăçалхи задачăсене палăртса хурĕ.

Вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене çĕнтерсе пырса, пирĕн республикăри колхозсем 1943 çулта ялхуçалăхĕнчи ĕçсене унччченхинчен нумай лайăхрах туса ирттерчĕç. Çуракине 1942 çулхинчен 12 кун маларах туса пĕтерчĕç. Çураки планне 18.866 гектар ирттерсе, кĕрачи планне 9600 гектар ирттерсе пурнăçларĕç. Тырпула вăрçăчченхи 1940 çулхинчен пĕр уйăх маларах пухса кĕртрĕç. Вырнă тырра октябрĕн 26-мĕшĕ тĕлне çапса пĕтерчĕç, государствăна ноябрĕн 4-мĕшĕ тĕлне, урăхла каласан, 1942 çулхинчен виçĕ уйăх маларах, тырă парса татрĕç. Кунсăр пуçне, республикăри колхозсем МТС-сен 1944 çулхи ĕçĕшĕн аванс шучĕпе 105 пин пăт тырă парса хучĕç.

Сталин юлташăн Октябрьти революци 26 çул тултарни çинчен тунă докладне ответлесе, пирĕн республикăри колхозсенче государствăна 2,5 миллион пăт ытла тырă тата 200 пин пăт ытла çĕрулми сутрĕç. Пирĕн Тăван çĕршывăн чи лайăх патриочĕсем — Елчĕк районĕнчи «Марс» колхозăн председателĕ Гаязов юлташ, Вăрнар МТС-ĕн трактористки Арсентьева юлташ, Комсомольски районри Буденный ячĕпе тăракан колхозăн председателĕ Краснов юлташ, Йĕпреç МТС-ĕн комбайнерĕ Маркиянов юлташ, Советски районри «1-ое Мая» колхозăн председателĕ Афанасьев юлташ тата ыттисем те государствăна хăйсен запасĕнчен 175—100-шер пăт тырă сутрĕç.

Республикăри колхозсем иртнĕ çулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре те лайăх çитĕнӳсем турĕç — выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне ĕнесемпе вăкăрсем енĕпе 114 процент, сыснасем енĕпе 108,7 процент, сурăхсем енĕпе 112,2 процент пурнăçларĕç. Кунсăр пуçне государствăна 1944 çулта аш-какай памалли обязательствăсен шучĕпе 8 пин пуç ытла майракалă шултăра выльăх, 21 пин сысна, 15 пин сурăх пачĕç, нимĕç оккупацийĕнчен ирĕке кăларнă районсене 7 пин пуç ытла выльăх ячĕç. Республикăри колхозсем иртнĕ çулта государствăна аш-какай памалли плана срокчен тултарчĕç.

Ялхуçалăхĕнчи ĕçсене лайăхрах туса ирттерессишĕн тата государство умĕнчи обязательствăсене срокчен пурнăçлассишĕн пынă ăмăртура Вăрнар районĕнчи колхозсем питĕ чаплă çитĕнӳсем турĕç. Вĕсем питĕ вăйлă тырпул туса илчĕç тата государствăна памалли мĕнпур ялхуçалăх продукчĕсене срокчен, чи малтан парса татнă колхозсемпе пĕрле, парса татрĕç. Вăй-хала шеллемесĕр ĕçлесе, Вăрнар районĕ Чăваш АССР-ĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне иккĕмĕш хут хăйĕн аллине илчĕ.

Колхозсен выльăх-чĕрлĕхне ытларах ĕрчетессишĕн пынă ăмăртура Элĕк районĕнчи колхозсем мала тухрĕç, район вăра Чăваш АССР-ĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне илчĕ. Элĕк районĕнчи колхозсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе панă заданисене, çав шутра лашасем ĕрчетес тĕлĕшпе панă заданисене те, туринчен те ăнăçлăрах пурнăçларĕç, выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне чылай нумай ӳстерчĕç.

Пĕлтĕр Шăхасан МТС-ĕн коллективĕ пуринчен те лайăхрах ĕçлерĕ. Вăл Чăваш АССР-ĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне илчĕ.

Темиçе çĕр колхоз, уйхир бригадисем тата звеносем 1943 çулта ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ӳстерме панă заданисене нумай ирттерсе тултарчĕç. Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз (вăл Чăваш АССР-ĕн Совнаркомĕпе ВПК(б) Обкомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне илчĕ), Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз, Вăрмар районĕнчи «Красный Мурат» колхоз тата ытти нумай колхозсем гектартан вăтам шутпа çĕршер пăт тырă туса илчĕç. Калинино районĕнчи «Клевер» колхозăн 3-мĕш бригади кашни гектартан 190 пăт çурхи тулă туса илнĕ, Куславкино районĕнчи «Ударник» колхозăн Тюрина юлташ ертсе пыракан звени гектартан 77-шер центнер табак пухса илнĕ, Комсомольски районри «Светлая жизнь» колхозăн Мокеев юлташ ертсе пыракан звени кашни гектартан кок-сагызăн чĕрĕ тымарне 19,1-шер центнер тата 31-шер килограмм кок-сагыз вăрлăхĕ пухса илнĕ.

Иртнĕ çулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре малта пыракан колхозниксем те пысăк çитĕнӳсем турĕç. Сĕнтĕр районĕнчи «Çĕнĕ Юнкă» колхозăн сысна пăхаканĕ Ф. Вазикова 8 сыснаран 152 сысна çури илсе ӳстернĕ. Красноармейски районри «12 лет Октября» колхозăн старши конюхĕ В. Романов 58 кĕсререн 58 тиха илсе ӳстернĕ, Çĕрпӳ районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозăн сĕт сăваканĕ В. Иванова сĕт сăвакан кашни ĕнерен 2.878-шар литр сĕт суса илнĕ тата ытти те.

Шăхасан МТС-ĕнчи Тимофеев юлташăн трактор бригади, Шăмăршă МТС-ĕн комбайнерĕ В. Фадеев, Çĕрпӳ МТС-ĕн комбайнерĕ М. Громов, Вăрнар МТС-ĕн трактористки Арсентьева, Йĕпреç МТС-ĕн комбайнерĕ Маркиянов тата ыттисем те нумайĕшĕ хăйсен суха тумалли тата тырă вырса кĕртмелли çулталăкри заданийĕсене нумай ирттерсе пурнăçланă, горючие нумай перекетлесе хăварнă.

Тырпулсен тата выльăх-чĕрлĕхсен тухăçлăхне ӳстерес ĕçре республикăри мĕнпур колхозсемпе МТС-сем лайăх, çине тăрса, мĕнпур майсемпе усă курса ĕçленĕ пулсан, пирĕн республикăн ялхуçалăхĕнчи çитĕнĕвĕсем тата та пысăкрах пулмаллаччĕ. Анчах та пирĕн, малта пыракан колхозсемпе пĕр пек условисенчех ĕçлесе тăнă пулин те, çуллен тырпул сахал туса илекен тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе начар ĕçлекен колхозсем сахал мар-ха. Çавăн пек колхозсем Пăрачкав, Кувакино, Шăмăршă, Чкаловски районсенче уйрăмах нумай. Çав районсенчи колхозсем кая юлнине кăçал пĕтермелле. Кая юлса пыракан районсенчи парти, совет, çĕрĕç органĕсен руководителĕсен чи малтан колхозсенче ĕç дисциплинине хăпартмалла, колхозниксемпе колхозницăсене вăрçă вăхăтĕнче хăйсен вăйне шеллемесĕр ĕçлеме кирли çинчен ăнлантарса памалла.

Пирĕн çуракине кăтартуллăн хатĕрлениме тата ăнăçлăн туса ирттерме пур майсем те пур. Ентĕ темиçе çĕр колхоз ялхуçалăхĕнче малта пыракансен канашлăвĕ тĕлне çуракине пĕтĕмпех хатĕрленсе çитнĕ—вăрлăхсене хывса сортласа хунă, ялхуçалăх машинисене юсаса пĕтернĕ, вырăнти удобренисене хатĕрлесе хурса хирсе турттарса тухнă, çураки валли туртăм вăйне (лашасене, вăкăрсене, сахал тухăçлă ĕнесене) кăтартуллăн хатĕрлеççĕ.

Вăрлăхсене çураки тĕлне хатĕрлесе хурас ĕç çине уйрăмах хытă çавăрăнса пăхмалла. Тĕштырăсен, техникăллă культурăсен, çĕрулмин тата ытти культурăсен вăрлăхĕсене пур колхозсенче те халех тупса çитермелле, çакна тумашкăн колхозниксенчен вăрлăх пухмалла тата колхозсен пĕр-пĕрне вăрлăх парса пулăшмалла. Çывăх вăхăтрах вăрлăхсене тасатса пĕтермелле, вĕсен шăтас пахалăхне тĕрĕслесе ялхуçалăх машинисене тата ут таврашĕсене юсаса лартмалла, çуртри акмалли производство планĕсене тата ытти ĕçсене те туса пĕтермелле. Колхозсен хăрнă сачĕсене çĕнĕрен лартса тăвас ĕçре çурхи вăхăтпа анлăн усă курмалла. Чăваш республики садсемпе паларса тăнă. Колхозсем садсем ĕрчетес ĕçе çĕнĕрен ура çине тăратма пултараççĕ, ăна ура çине тăратмалла та, мĕншĕн тесен вăл ялхуçалăхĕн чи тупăшлă отраслĕсенчен пĕри пулса тăрать. Çак ĕçе тума пирĕн пур майсем те пур. Ана пикенерех тытăнас çеç пулать.

Ялхуçалăхĕнче малта пыракансен канашлăвне тăванла икĕ республикăран — Мари республикипе Мордва республикинчен—делегацисем килнĕ.

Паян уçăлакан канашлу колхозсенче çуракине тĕплĕн хатĕрленсе лайăх туса ирттерессишĕн, тырпула ăнăçлăн пухса кĕртессишĕн, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пурнăçлассишĕн тата государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли обязательствăсене кăтартуллăн тултарассишĕн пыракан ăмăртăва татах та анлăрах сарса ямалли май пулса тăрĕ.

Канашлăва килнĕ сынсене — ялхуçалăхĕнче малта пыракансене — большевикла салам!

Совет Информаци Бюровĕнчен

ФЕВРАЛĔН 14-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Февралĕн 14-мĕшĕнче пирĕн çарсем ГДОВ хулинчен кăнтăртарахра тата кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре çапла х наступлени туса пынă, темиçе ял туртса илнĕ.

ЛУГА хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă, БАРАНОВО, ЗАПОЛЬЕ, СМЕРДИ, ПУСТОШКА, ДУБРОВКА, КУТ, РАКОВИЧИ, НАВОЛОК ялĕсене туртса илнĕ.

ЗВЕНИГОРОДКАПА ШПОЛА хулисенчен çурçĕртерехре пирĕн çарсем çаплах тăшманăн çавăрса илнĕ группировкине пĕтерессишĕн çапăçнă, нимĕçсем хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, Киев облаçĕнчи район центрне— КОРСУНЬ-ШЕВЧЕНКОВСКИЙ хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата КОШМАК, ЛИСТВЕНА, ПЕТРУШКИ, ТУРКЕНЦЫ, САМОРОДНЯ ялĕсене йышăннă. Çавăнпа пĕр вăхăтрах ЗВЕНИГОРОДКАРАН çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшманăн çавăрса илнĕ группировкине пулăшмашкăн хĕсĕнсе кĕме хăтланнă нимĕç танкĕсемпе пехотин пысăк вăйĕсемпе хаяррăн çапăçнă. Хăйĕн çынисемпе техникине шеллемесĕр çапăçса темĕн чухлех пĕтернине пула, тăшман пирĕн оборона ăшнелле кăштах кĕнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă, артиллерипе минометсем персе тăнă тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Февралĕн 13-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 95 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 38 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Гдов хулинчен кăнтăртарахра тата кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, темиçе ял туртса илнĕ. Зарудинье ялĕ районĕнче пĕр соединени чаçĕсем тăшман çарĕсен ушкăнне çавăрса илнĕ те ăна хаяр çапăçура пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсене 72 тупă (вĕсенчен виççĕшĕ гусеницăллă тракторпа турттарса çӳрекен йывăр тупăсем), 352 автомашина, çар хатĕрĕсем тиенĕ 80 лав, 1.500 лаша тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. Тыткăна чылай илнĕ. Пирĕн разведчиксен ушкăнĕ (унта Кабанов сержант, Денисенко ефрейтор, Шадский старши сержант, Терехов сержант, Федоровпа Швец красноармеецсем пулнă) тăшманăн пĕр тĕреклетнĕ пунктне сасартăк вăркăнса кĕрсе кайнă. Çакна кĕтмен нимĕçсем хирĕç тăман, хăйсен хĕçпăшалне çĕре пăрахнă та параннă. Разведчиксем тыткăна парăннă 36 гитлеровецпа хамăр чаçа илсе пырса панă.

* * *

Луга хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă. Пĕр соединени чаçĕсем тăшмана Раковичи тата Новолок ялĕсенчен хĕссе кăларнă. Çавăн чухне 300 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра совет çарĕсем, малалла куçса пырса, темиçе ял тытса илнĕ. Çав ялсемшĕн пулса иртнĕ çапăçусенче нимĕç пехотине пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă.

Пирĕн Луга хулине туртса илнĕ çарсем нимĕçсенне 42 тупă, 61 миномет, 2.000 çити винтовкăпа автомат, 4 танк, 2 бронемашина, 170 автомашина, 80 лав, пĕр миллион ытла патрон, 6.000 снарядпа авиабомба, боеприпас, горючи тата апатçимĕç склачĕсем 50 тытса илнĕ.

* * *

Звенигородкăпа Шпола хулисенчен çурçĕртерехре пирĕн çарсем çаплах тăшманăн çавăрса илнĕ группировкине пĕтерессишĕн çапăçнă. Пĕр соединени чаçĕсем, тăшман хытă хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, темиçе ял туртса илнĕ. Çитĕнĕве вăйлатса пырса, совет боецĕсем çавăрса илнĕ группировкăн тĕреклĕ пунктне—Корсунь-Шевченковский хулине хӳтĕлекен тăшман чаçĕсене пырса çапнă. Хаяр çапăçусем хыççăн пирĕн çарсем паян нимĕç гарнизонне аркатса тăкнă та Киев облаçĕнчи район центрне — Корсунь-Шевченковский хулине туртса илнĕ. Нимĕçсен пĕр чаçĕ çавăрса илнĕ ункăран хĕсĕнсе тухма хăтланнă. Пирĕн çарсем вăл ушкăна татса илнĕ те нимĕçсен 1.000 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Звенигородка хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах тăшманăн çавăрса илнĕ группировкине пулăшмашкăн хĕсĕнсе кĕме хăтланнă нимĕç танкĕсемпе пехотин пысăк вăйĕсемпе çапăçнă. Питĕ хаяр çапăçусем пуçланса кайнă. Хăшпĕр ялсем темиçе хутчен те алран-алла куçнă. Совет артиллерисчĕсем, минометчиксемпе пехотинецсем гитлеровецсен наступлени тăвакан колоннисене хăйсен хăватлă вут-çулăмĕпе пĕтерсе тăкнă. Хăйĕн чĕрĕ вăйĕпе техникине шеллесе тăмасăр темĕн чухлех пĕтернине пула, тăшман пирĕн оборона ăшнелле кăштах кĕнĕ. Çапăçура нимĕçсен 2.000 салтакĕпе офицерĕнчен кая мар вĕлерсе пĕтернĕ, 73 танк тата хăй тĕллĕн çӳрекен 20 тупă ытла çĕмĕрсе тăкнă.

Совет летчикĕсем тăшман аэродромне тапăннă, нимĕçсен çĕр çинче пулнă виçĕ моторлă 12 транспорт самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Литвăра кĕрешекен «Жальгирис» тата «Вильнюс» ятлă отрядсенчи партизансен ушкăнĕ чугун çул кĕперне сирпĕнтерсе янă, нимĕçсен фронта каякан çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Пĕтĕм состав йăлтах çĕмĕрĕлсе кайнă. Тăшманăн 200 салтакĕпе офицерĕ ытла пĕтнĕ. Тепĕр районра совет патриочĕсем мина хурса нимĕçсен виçĕ çар эшелонне сирпĕнтерсе янă, унтан тата телефонпа телеграф сыхăнăвĕн линине 20 километр татса тухнă.

* * *

Ленинград фронтĕнче нимĕçсен тип çĕр çинчи вăйĕсен главнăй командованийĕн штабĕн инженери отделĕн вăрçăри корреспондентне Рудольф Харига тыткăна илнĕ. Вăл çапла каласа кăтартнă: «Иртнĕ çулхи кĕркунне эпĕ Берлинта пултăм. Мана çĕнĕ вырăна, Ленинград районне ямалла турĕç. Мана çавăнта кайса, нимĕç саперĕсен ĕçĕпе паллашма хушрĕç. Фронта эпĕ ноябрь уйăхĕнче çитрĕм. 50-мĕш армейски корпус штабĕнче сапернăй çарсен начальникĕ Дюринг полковник мана кирлĕ пек сведенисене пурне те пачĕ. Вара эпĕ Лиговски канал патĕнче пултăм тата Пушкин хули патне те çитсе куртăм. Эпĕ Ленинград патĕнче туса тултарнă пур укреплениcене те лайăх пăхса тухрăм. Вĕсене питĕ çирĕп тунă тесе шутларăм. Çаплах шутлатчĕç Берлинри тата фронтри çар специалисчĕсем те. Никам та иккĕленмен, пурте пирĕн укреплениcене никам та çĕмĕрме пултарас çук, вĕсем совет çарĕсен тем пек вăйлă тапăнăвне те чăтмалла тесе шанса тăратчĕç. Анчах та юлашки ĕçсем эпир вырăссен пултарулăхне çителĕклĕ хакламаннине кăтартрĕç. Вырăс артиллерийĕн вут-çулăмĕ чăнахах та мĕн пуррине йăлтах çĕрпе хутăштарса ячĕ, эпир икĕ çул хушши туса лайăхлатса çĕнетсе пынă чи хăватлă инженери укреплениĕсенчен те çĕмĕрĕлменни ним те тăрса юлмарĕ».

СССР орденĕсемпе медалĕсене пани

1944 çулхи февралĕн 14-мĕшĕнче ССР Союзĕн Верховный Совечĕн депутачĕ—Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. А. Андреева юлташ, ССР Союзĕн Верховный Совет Президиумĕ хушнипе, наградăланисене СССР орденĕсемпе медалĕсене панă.

«Знак Почета» орденĕ государство хăрушсăрлăхĕн старши лейтенанчĕсем Б. В. Васильев тата Г. С. Петров, государство хăрушсăрлăхĕн капитанĕ Г. С. Попов юлташсене панă.

«Ĕçри хастарлăхшăн» медаль государство хăрушсăрлăхĕн подполковникĕ Н. И. Никитин тата Чăваш АССР Совнарком председателĕн заместителĕ Ф. Т. Семенов юлташсем илчĕç.

Наградăланисен ячĕпе Б. В. Васильев юлташ кĕске сăмах тухса каларĕ.

Орденсемпе медальсем панă хыççăн З. А. Андреева юлташ наградa илнĕ юлташсене саламларĕ тата ĕçре çитĕнӳсем тума сунчĕ.

ВЦСПС-па пĕр Халăх Комиссариатĕнче

ВЦСПС-па пĕр Халăх Комиссариачĕ, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăван 1944 çулхи январь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, Челноков юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен завода виççĕмĕш премин пама йышăннă.

* * *

ВЦСПС-па пĕр Халăх Комиссариачĕ, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăван 1944 çулхи январь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, Володин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен завода иккĕмĕш премин пама йышăннă.

ХАЛĂХĂН ПĔТĔМ ВĂЙНЕ ФРОНТА ПУЛĂШНĂ ÇĔРЕ ПАРАР!

И. К. ИВАНОВ

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн пропаганда енĕпе ĕçлекен секретарĕ

Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ 26 çул тултарни çывхарать.

Çак историллĕ кун эпир нимĕçсен фашистла захватчикĕсене тĕпĕ-йĕрĕпех çапса аркатассишĕн тата вĕсене хамăрăн тăван çĕр çинчен хăваласа кăларассишĕн хаяррăн кĕрешнĕ вăхăтра паллă тăватпăр. Пирĕн геройла Хĕрлĕ Çар иртнĕ çул тăшманăн нумай дивизине çĕмĕрсе тăкрĕ. Çапăçу хирĕнче тăшман хăйĕн темиçе миллион салтакĕсемпе офицерĕсен виллине, пиншер танк, самолет, оруди, миномет, пулемет, темĕн чухлĕ çар пурлăхĕ тата тумтир пăрахса хăварчĕ. Совет воинĕсем хăватлăн пырса çапнипе тăшмана Ленинград хулинчен инçете ывăтса янă.

Иртнĕ çулталăк пирĕншĕн чаплă çĕнтерӳсен çулталăкĕ, вăрçă ĕçĕнче татăклă улшăнусем тунă çулталăк пулса тăчĕ. 1944 çул нимĕçсен фашистла вăрă-хурахĕсене тĕпĕ-йĕрĕпех çапса аркатмалли çулталăк пулса тăмалла.

Сталин юлташ Октябрьти социализмлă Аслă революци 26 çул тултарнă ятпа тунă хăйĕн историллĕ докладĕнче çапла каларĕ: «Çĕнтерӳ çывăх ĕнтĕ, анчах та ăна алла çавăрса илес тесен, çĕнĕрен ытларах вăй хуни, пĕтĕм тыл хăйне-хăй шеллемесĕр ĕçлени, Хĕрлĕ Çар фронтра пĕлсе тата татăклăн кĕрешни кирлĕ».

Чăваш халăхĕ, ССР Союзĕнчи мĕнпур халăхсем пекех, фронта пулăшас тесе ывăнма пĕлмесĕр ĕçлет, вăл тăван Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флотне пулăшассишĕн нимĕн те шеллесе тăмасть. Пирĕн орденлă республикăри колхозсемпе колхозниксем иртнĕ çулта ялхуçалăхĕнчи мĕнпур ĕçсене ăнăçлăн туса ирттерчĕç, государствăна тырă тата аш-какай памалли плансене срокчен пурнăçа кĕртрĕç, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне ирттерсе пурнăçларĕç, государствăна 1944 çулшăн аванс шучĕпе 105.000 пăт тырă тата 100.000 пăт ытла аш-какай парса хучĕç, государствăна 2,5 миллион пăт ытла тырă сутса ăна çиéнчех хатĕрлев пункчĕсене леçсе пачĕç.

1943 çулта пирĕн колхозсемпе колхозниксем фронтпа çĕршыва валли 1942 çултинчен икĕ хут ытлараха яхăн тырă туса пачĕç. Оборона фондне вăрçă пуçланнăранпа вĕсем 91 миллион тенкĕ укçа, 1,5 миллион пăт ытла тырă тата 80.000 пăт аш-какай пачĕç. Кунсăр пуçне вĕсем фронтовиксем валли ăшă япаласем хатĕрлеме 84.960 тир, 52.877 килограмм çăм пухрĕç, боецсем валли 21.500 кĕрĕк пиншак, тиртен çĕленĕ курткăсемпе ăшă шарфсем, 134.850 мăшăр çăм носки, çăм алшиш тата алсасем, 25.369 мăшăр çăматă, 24.632 çĕлĕк, 11.980 мăшăр ăшă кĕпе-йĕм тата ытти те хатĕрлесе ăсатрĕç.

Республикăн малта пыракан çынисем — советăн çулăмлă патриочĕсем государствăна çĕршер пăт ытларах та тырă сутрĕç. Елчĕк районĕнчи «Марс» колхоз председателĕ коммунист А. Гаязов — 178 пăт, Вăрнар МТС-ĕн трактористки Е. Арсентьева — 173 пăт, Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз председателĕ—коммунист В. Зайцев — 117 пăт, Комсомольски районри Буденный ячĕпе тăракан колхоз председателĕ И. Краснов, Советски районри «Первое мая» колхоз председателĕ М. Афанасьев, Йĕпреç МТС-ĕн комбайнерĕ П. Маркиянов кашниех 100-шер пăт тырă сутрĕç.

Тăван çĕршывăн çак патриочĕсен ячĕсене те—танксемпе самолетсем тума çĕршер пин е ытларах та укçа панă тата Сталин юлташăн саламне илме тивĕçлĕ пулнă. Сарсков, Дубровин, Васянин, Пугачев тата ыттисен ячĕсене пĕтĕм республика пĕлсе тăрать.

Пирĕн рабочисем те çине тăрса ĕçлеççĕ. Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен завод пĕр вĕçрен ĕнтĕ тăхăр уйăх хушши Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне хăйĕн аллинче тытса тăрать, çак завод нумай пулмасть Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕ илме тивĕçлĕ пулчĕ. Завод руководителĕсемпе стахановецсене ССР Союзĕн орденĕсемпе медалĕсене панă. Челноков юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводри чылай çынсем вăрçă вăхăтĕнче икĕ хутчен награда илме тивĕçлĕ пулчĕç. Республикăри ытти пысăк предприятисенчен чылайĕшĕ уйăхран-уйăхах ĕнтĕ Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура малти вырăнсене йышăнаççĕ.

Чăваш республикинчи чугун çул транспорчĕн работникĕсем те фронта хĕçпăшал, çар хатĕрĕ тата апатçимĕç турттарса парас тĕлĕшпе пысăк ĕç тăваççĕ. Вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене пăхмасăр, служба Улатăрти отделенийĕ 1943 çулта вагонсем çине грузсем тиемелли плана 114 процент, Канаш станцийĕ—118 процент, Шупашкар станцийĕ — 340 процент тултарчĕç.

Фронта пулăшас ĕçре рабочисемпе колхозниксенчен пирĕн интеллигенци те юлса пымасть. Вăл та, ывăнма пĕлмесĕр ĕçлесе, çĕршыв оборонине тĕреклетессишĕн кĕрешет, рабочисемпе колхозниксене промышленноçпа ялхуçалăхне çĕклеме пулăшать, совет наукипе культурине малалла аталантарса пырать.

Пирĕн республикăри предприятисемпе колхозсенче тата учрежденисенче ĕçлекен 200 çынна яхăн вăрçă вăхăтĕнче ССР Союзĕн орденĕсемпе медалĕсене илчĕç. 2000 çынна ытла Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотине панă.

«Çирĕппĕнех çапла калама пулать, совет çыннисем тылра вăя шеллемесĕр ĕçлени, Хĕрлĕ Çарăн паттăр кĕрешĕвĕпе пĕрлех, Тăван çĕршыва хӳтĕленĕ çĕрте халăх нихăçан пулман паттăр ĕç тунине кăтартса историе кĕрсе юлать». (**СТАЛИН**).

Пирĕн рабочисене, колхозниксене тата служащисене çакăн пек çине тăрса ĕçлеме совет воинĕсен геройла ĕçĕсем, пирĕн паттăр землякĕсен геройла ĕçĕсем хаваслантарса пыраççĕ. Чăваш республики Совет Союзĕн 12 Геройне — Орлов, Васильев, Винокуров, Ефимов, Коновалов, Сидорин, Габайдулин, Лаптев, Поляков, Петров, Ахаев, Безруков юлташсене пăхса çитĕнтерчĕ. Чăваш халăхĕн фронтри 5000 ытла ывăлĕпе хĕрне Совет Союзĕн орденĕсемпе медалĕсене панă.

Миллионшар совет çыннисен чĕрисем тискер тăшмана курайманлăхпа тулнă. Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем Совет Союзĕн вăхăтлăха тытса илнĕ районĕсенче тунă тискер ĕçсене тата вĕсен халь тăвакан тискер ĕçĕсене эпир нихăçан та манас çук. Çав тискер ĕçсемшĕн гитлеровецсене ответ тыттарас кун çывхарса килеть, вăл çывăх ĕнтĕ.

Тăшмана тĕпĕ-йĕрĕпе аркатса тăкман-ха. «Йăваш чунлă пулин, лăпланса ларни, малашнехи çапăçусен йывăрлăхĕсене хакламанни, — тесе асăрхаттарать Сталин юлташ,— уйрăмах хăрушă ĕç пулнă пулĕччĕ: Халĕ тăшман хăй вăхăтлăха туртса илнĕ территорин кашни лаптăкĕшĕн урса кайсах хаяррăн çапăçать, мĕншĕн тесен пирĕн çар малалла ярса пуснă кашни утăм нимĕçсене вĕсем пирĕн çĕршывра тунă тискер ĕçсемшĕн тавăрас сехете çывхартать. Нимĕçсен фашистла захватчикĕсене тĕппипех çĕнтерессишĕн пыракан çапăçу пирĕн çарпа халăхран татах та ытларах вăй хурса кĕрешсе паттăрла çĕнĕ ĕçсем тума ыйтать».

Акă мĕншĕн пирĕн халăхăн пĕтĕм ĕçе фронта татах та анлăрах пулăшас тĕллевпе пăхăнтарса туса пымалла. Колхозлă ялăн мĕнпур вăйĕсене çуракине вăхăтра та пысăк пахалăхпа хатĕрленнĕ çĕре, тырпул тухăçлăхне ӳстернĕ çĕре, кăçал кашни гектартан 100-шер пăт тĕштырă туса илессишĕн кĕрешнĕ çĕре мобилизацилемелле. Çакă вăл районсенчи партипе совет органĕсен, ялти коммунистсемпе комсомолецсен халĕхи тĕп ĕçĕ ĕнтĕ.

Промышленность предприятийĕсенчи, артельсенчи, чугун çулпа шывçул транспортĕнчи тата вăрман организацийĕсенчи пĕтĕм ĕçе — ĕç тухăçлăхне малалла ӳстерсе пырас, туса кăларакан продукцин хăйне ларакан хакне йӳнетес, перекетлĕх режимне çирĕп тытса пырас тата продукци кăларассине ӳстерес, социализмлă ăмăртăва анлăн сарса ярас тĕллевпе туса пымалла.

Сталин юлташăн историллĕ докладĕпе приказĕсене тата ССР Союзĕн 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн X-мĕш Сессийĕн материалĕсене тарăннăн вĕренсе, ĕçре çĕнĕ çĕкленӳ тумалла. Ялсенче, промышленность предприятийĕсенче, артельсенче, вăрман организацийĕсемпе транспортра агитаципе пропаганда ĕçне татах та анлăнрах сарса ямалла. Политикăллă агитаци ĕçне çарпа хуçалăх тĕлĕшĕнчи задачăсене пурнăçа кĕртес задачăпа, кашни колхоз, предприяти тата колхозникпе рабочи, служащи умĕнче тăракан задачăсемпе çыхăнтарса туса пырас пулать.

Вăйлă тырпулшăн кĕрешни—тăшмана çĕнтерессишĕн кĕрешни

Ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри канашлăвĕн участникĕсене большевикла салам!

Вăрнар МТС-ĕн паллă трактористки Е. А. Арсентьева. Вăл государствăна 173 пăт тырă сутнă.
Н. Данилов фотоÿкерчĕкĕ.

ТИМĔРÇĔ ГАВРИЛОВ

Иван Гаврилович Гаврилов ватă ĕнтĕ, 61 çула çитнĕ. Анчах унăн мăлатукпа хĕскĕч тытма хăнăхнă аллисем тĕреклĕ-ха.

Çамрăклах унта-кунта ĕçлесе, ремесла ĕçне, юратнă вăл. Хăйĕн шăллĕнĕпе пĕрле тимĕрçĕ ĕçне вĕреннĕ. Вăл малтанах çăрасем юсама, витресем тĕплеме вĕренет, унтан вара пысăкрах япаласем тума хăнăхса çитет. Çапла вăл юлашкинчен ялта питĕ ăста тимĕрçĕ пулса тăрать.

1932 çулта М. Гаврилов колхоза кĕрет. Çавăнтанпа вара пĕрмаях колхоз тимĕрçи пулса ĕçлет. Кашни çул хăйĕн пултарулăхне ытларах та ытларах кăтартать.

Иван Гаврилов «Заря» колхозри плугсене тата ытти машинăсене январĕн 1-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмĕшпех юсаса çитерчĕ. Плугсем çуракине хатĕр. Çак ĕçе вăл пĕтĕмĕшпех патриотизмла туйăмпа туса пырать, мĕншĕн тесен, хăйĕн тимĕрçĕ ĕçĕ колхозра питех те усăллă та кирлĕ пулса тăнине вăл лайăх ăнланать.

— Ĕçлес килет,—тет вăл,—Хĕрлĕ Çара пулăшас килет.

Гавриловăн виçĕ ывăлĕ фронтра çапăçаççĕ. Вăталăххи—Викентий — Сталинграда хÿтĕленĕ. халĕ капитан, пĕр çар чаçĕнче штаб начальникĕ пулса ĕçлет.

— Нимĕçсем çав тери тискер,—тет Гаврилов юлташ,—çавăнпа та пирĕн вĕсене тĕппипех пĕтермелле.

Гаврилов иртнĕ çулта колхозра ĕçлесе, 965 ĕçкунĕ тунă. Кăçал вăл Тăван çĕршывпа фронта пулăшас шутпа государствăна 49 пăт тырă сутрĕ.

— Пирĕн халĕ кашниннех хамăрăн çĕршыва нимĕç вăрă-хурахĕсенчен хăвăртрах тасатса çитерес тĕллев пулмалла. Çавăнпа та колхозра мĕнпур вăя хурса ĕçлемелле!—тет Гаврилов колхозниксем умĕнче.

Вăл хăйĕн сăмахĕсене чыслăн та мухтавлăн пурнăçа кĕртсе пырать.

СТЕПАН АСЛАН.
Шăхасан районĕ.

Гектартан 100 пăтран кая мар тырă туса илессишĕн

Отечественнăй вăрçă кунĕсенче эпир, пĕтĕм ĕçе фронт ыйтăвĕсене тивĕçтерес тĕллевпе туса пыратпăр. Иртнĕ виçĕ çул хушшинче пирĕн колхозăн колхозникĕсем чылай пысăк ĕçсем турĕç.

Эпир нумай пулмасть 1943 çулхи ĕçсен итогĕсене пăхса тухрăмăр. 1942 çулхипе танлаштарсан, 1943 çулта пирĕн колхозниксем вăйлă ĕçлерĕç. Пĕтĕмпе 888 гектар çинчи тырра октябрĕн 13-мĕшĕнче çапса пĕтерчĕ, сентябрĕн 28-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă парса татнă. Пĕтĕм тырра таса амбарсене кĕртнĕ, пĕр тăкак та туман.

Вăрçă кунĕсенче эпир хĕрарăмсемпе çамрăксене ĕçе хăнăхтарса пытăрар. Акă, 1928 çулта çуралнă Усман Саметов иртнĕ çулта чи малтанхи хут машинăсемпе ĕçлеме вĕренчĕ. Жнейкăпа тырă вырнă вăхăтра нормăна 112,5 процент тултарса пычĕ. Вăл халь сеялка чаçĕсене вĕренет, çуракинче машинăпа тырă акма хатĕрленет.

Иртнĕ çулăн итогĕсене илсен, пирĕн колхозниксем фронт умĕнче пысăк ĕçсем туса ирттерчĕç. Нумай колхозниксем государствăна 40—70 е 100 пăт таран тырă сутрĕç. Эпĕ хам та Тăван çĕршывшăн хамăн сывлăха шеллемесĕр ĕçлетĕп. Эпĕ государствăна кооператив урлă 178 пăт тырă сутрăм. Пĕтĕмпе пирĕн колхоз 10 пин пăт ытла тырă сутрĕ. Сутнă тырăшăн промышленность таварĕсем сахал мар туянчĕç.

Колхозниксем Хĕрлĕ Çарăн фронтри çĕнтерĕвĕсемпе чун-чĕререн савăнаççĕ. Тăван Хĕрлĕ Çаршăн нимĕн те шеллемеççĕ. Акă, ăшă япаласем парса пулăшнин хăшпĕр итогĕсене илсе пăхар: иртнĕ икĕ çул хушшинче боецсем валли пурĕ 30 кĕрĕк пиншак, 38 мăшăр çăматă, 28 фуфайка, 77 мăшăр носки, 211 мăшăр алшиш, 110 çĕлĕк, 112 тир, 74 килограмм çăм, пĕр тăлăп ярса панă. Кусемсĕр пуçне, 1943 çулта боецсемпе офицерсем валли 633 килограмм какай, 52 килограмм çу, 75 килограмм пыл, 15 центнер шурă çăнăх, 1750 çăмарта т. ыт. те чылай ярса патăмăр. Хĕрлĕ Çара пĕр ĕçĕмсĕр пулăшса тăрас шухăш-кăмăлсем пирĕн колхозниксен пушшех те вăйланса пыраççĕ. Пирĕн колхозри коммунистсем колхозниксем хушшинче ăнлантаруллă ĕçе ырми-канми туса пыраççĕ. Акă, колхоз председателĕн заместителĕ пулса ĕçлекен Фетах Салахеев юлташ кашни кун тенĕ пекех бригадирсемпе калаçусем ирттерет. Колхоз правленийĕн бухгалтерĕ коммунист Ш. Бикеев та хăйĕн ĕçне пĕлсе туса пырать, вăл та ырми-канми ĕçлет. Сахалтын Валишев юлташ иккĕмĕш бригадăра агитатор пулса ĕçлет. Ку бригада хĕллене кĕнĕренпе уя 2075 лав тислĕк кăларчĕ, плугсене пурне те юсаса пĕтерчĕ. Коммунистка Галия Гимранова юлташ конюхсемпе выльăх-чĕрлĕхсене пăхакансем хушшинче ĕçлет. Ăнлантаруллă ĕçе тĕплĕн туса пынине пула, пирĕн колхоз выльăхсенчен чылай пысăк тупăш илчĕ. Иртнĕ çулта эпир пурĕ 28 тиха, 24 пăру, 55 сурăхран 71 путек илсе, пурне те тĕрĕс пăхса çитĕнтертĕмĕр. Кашни ĕнерен вăтам шутпа 1250 литр сĕт суса илтĕмĕр. Енесене пăхакан Тагире Давлягшина, Дейле Динмухаметова, Кашифе

Елчĕк районĕнчи „Марс“ колхозăн председателĕ А. Г. Гаязов. Вăл государствăна 178 пăт тырă сутнă.
Н. Данилов фотоÿкерчĕкĕ.

Хасьянова юлташсем хăйсен ĕçне юратса тăваççĕ. Иртнĕ 1943 çулта эпир, кашни сурăхран 2,2 килограмм çăм касса илме палăртнă пулсан, вăтамран кашни сурăхран 3,5 килограмм çăм илтĕмĕр.

Выльăх-чĕрлĕхсем çинчен каланă май, манăн лашасене пăхакан конюхсем çинчен те каласа хăварас килет. Г. Оскаров, С. Сакиров, С. Хайруллин, М. Галеев юлташсем лашасене лайăх пăхаççĕ, вăхăтра тасатаççĕ.

Конюхсем лаша апачĕсене тирпейлĕ, тыткалаççĕ. Кашни лашана кунне 4 килограмм сĕлĕ, 8 килограмм утă, 4 килограмм сĕлĕ улăмĕ паратпăр, кашни лаша айне ыраш улăмĕ саратпăр. Çапла вара лашасем выртсан та вараланмаççĕ, шăнмаççĕ. Çавăн пекех ытти выльăхсене те виçепе çитеретпĕр. Çамрăк пăрусене сĕт, çăнăх шывĕ парса тăратпăр.

Халĕ эпир çитес çуракине хатĕрленетпĕр. Ку тĕлĕшпе те пирĕн колхозниксем аван ĕçлеççĕ. Кăçал пĕтĕмпе 600 гектар çинче çуртыррисем акмалла, вăл çĕр лаптăкне пĕтĕмпех кĕрхи çĕртме туса хăварнă.

Нумайрах тырпул туса илес тесе, уя 8 пин лав тислĕк кăларнă. Кашни кун 6 лаша тислĕк тăкса тăраççĕ. Карта таврашĕсенчи тислĕке кашни кунах пуçтарса, уя кăларатпăр. Кунсăр пуçне 4 тонна кĕл, 3 тонна кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса хатĕрленĕ. Ку ĕçсене çуракине тухиччен туса пыратпăр. Плугсем пирĕн пурте ĕçе хатĕр, юсанă сÿресем 64 пур. Çуракинче ĕçлеме тата 120 хăмăт, 120 йĕнерчĕк хатĕрленĕ. Вăрлăхсен шăтас пахалăхĕ аван. Акаçăсем хăйсен машинисене хатĕрлесе çитерчĕç. Акаçăсем пулса хĕрарăмсем те ĕçлеççĕ. Акă, машинăпа лайăх ĕçлеме вĕренсе çитнĕ Сейтет Саматова, иртнĕ çуракинче 6-шар гектар акса пынăскер, çитес çуракинче татах та лайăхрах ĕçлеме хатĕрленет. Пирĕн колхозăн пурĕ 8 сеялка. Кашни бригадăна икшер сеялка тивет. Тырăсене пĕтĕмĕшпех машинăпа акса хăварас тетпĕр.

Халĕ 32 çын агрокружокра вĕренеççĕ, унта 5 заняти туса ирттернĕ. Кăçал эпир гектартан вăтам шутпа 100 пăтран кая мар тĕштырă туса илессишĕн кĕрешетпĕр.

Абдул ГАЯЗОВ,
Сăрьелĕнчи «Марс» колхозăн председателĕ (Елчĕк районĕ).

Вăрмар районĕнчи „Дружба“ колхозăн председателĕ И. Г. Григорьев. Вăл государствăна 85 пăт тырă сутнă.
Н. Данилов фотоÿкерчĕкĕ.

ÇУРАКИ ВАЛЛИ МĂНТĂР ЛАШАСЕМ ХАТĔРЛЕТПĔР

Эпир халĕ çитес çуракине тимлĕн хатĕрленетпĕр. Хĕле кĕнĕренпе кăна уя 4650 лав тислĕк кăлартăмăр. 700 центнер минераллă удобрени, 100 центнер кĕл тата 90 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ хатĕрленĕ. Вăрлăх çителĕклĕ, ăна пĕтĕмĕшпех сортласа хунă. Шăтас пахалăхĕ те лайăх. Ялхуçалăх машинисемпе ут таврашĕсене юсаса пĕтертĕмĕр.

Кăçал эпир хамăр умма çурхи тырăсене йăлтах лашасемпе, МТС тракторĕсене явăçтармасăр, правительство кăтартнă срокра акса хăварас задача лартрăмăр.

Пирĕн колхозра 98 лаша пур, вĕсенчен ĕç лаши—66. Ĕç лашисене çуракине хатĕрлес пирки пирĕн колхозниксем тăрăшса ĕçлеççĕ. Эпир чăн малтанах лашасене бригадăсем çумне, бригадăра—уйрăм колхозниксем çумне çирĕплетнĕ. Çакăн пек туни лашасене пăхас тата вĕсемпе усă курас ĕçри ответлăха ÿстерет.

Вăрçă вăхăчĕ выльăхсен апатне тирпейлĕ тыткалама хушать. Çĕршывпа фронта ытларах тĕштырă парас шухăшпа, эпир выльăхсене улăмпа тата утăпа ытларах тăрантаратпăр. Çавăн пекех ыраш улăмне вакласа, пăспа пĕçерсе çитеретпĕр. Улăма, ваклана хыççăн, ятарласа тунă чансемпе каткасене тултаратпăр та ун çине вĕри шыв яратпăр. Вара ăна хыттăн пусарса сывлăш тухмалла мар хупласа хуратпăр. Пĕр талăк çапла тытнă хыççăн, çитерме тытăнатпăр. Çитерес умĕн лаша апачĕ çине кăштах çăнăх тата кашни лаша пуçне 40-шер грамм тăвар сапса паратпăр. Çак апата лашасем çĕç мар, ытти выльăхсем те юратсах çиеççĕ.

Эпир кăçал кашни гектартан 100 пăтран кая мар тĕштырă туса илессишĕн кĕрешетпĕр. Çак кĕрешÿре пире мухтавлă Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсем хавхалантарса пыраççĕ.

И. ГРИГОРЬЕВ,
Вăрмар районĕнчи «Дружба» колхозăн председателĕ.

Çуракине лайăх хатĕрленеççĕ

Пĕнерес районĕнчи «Канаш» колхоз. кăçал гектартан 100 пăтран кая мар тĕштырă туса илме тăрăшса, çуракине тимлĕн хатĕрленет. Выртти удобренисем хатĕрлемелли плана ытлашшипех тултарнă. Вăрлăхсем çителĕклĕ, вĕсене тасатнă. Вĕсен шăтас пахалăхне сăнама лабораторине янă. Плугсемпе сÿресене ытлашшипех юсанă, сÿресем çумне туртасем тата пăявсем хатĕрленĕ. Плугсем юсас тĕлĕшпе Е. Дмитриев тăрăшса ĕçлет, вăл виçĕ плуг вырăнне çичĕ плуг юсанă. Нумаях пулмасть вăл хăйĕн ывăлĕ М. Егоров фронтра нимĕç захватчикĕсене хирĕç паттăррăн кĕрешнĕшĕн «Хĕрлĕ Çăлтăр» орденĕ илни çинчен хыпар илчĕ. Çакăн хыççăн вăл тата та тăрăшарах ĕçлеме тытăнчĕ.

Лашасем пурте вăтам самăр. Çураки вăхăтĕнче кашни лашана кунне 3 килограмм сĕлĕ çитерме шутласа, сĕлĕ çителĕклĕ уйăрса хунă, выльăхсен ытти апачĕсем те çителĕклĕ.

— Çуракине лайăх хатĕрленни вăл фронта пулăшни пулать.—теççĕ колхоз членĕсем.

П. КУРАКОВ.

Кашни сысна аминчен 17 çăвăр

ИШЛЕЙ. Салабайкасси зоовет-участокне кĕрекен «Майăн 1-мĕшĕ» колхозăн сысна ферминче Нина Хрисанова юлташ иккĕмĕш çул ĕçлет. Вăл хăйĕн ĕçне юратса тăвать. Ăна виçĕ сысна ами пăхма хушнă. Çав амасенчен планпа 39 çура илмелле пулнă пулсан, вăл 52 çура илсе çитĕнтернĕ. Ĕçшĕн хушса тÿлемелли закон тăрăх Хрисанова юлташ 5 сысна çури илет.

Е. ФИЛИППОВА.

Ÿкерчĕк çинче: Республикăра мала тухнă Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз председателĕ В. В. Зайцев юлташ государствăна 117 пăт тырă сутнăшăн магазинра таварсем туянать.
Н. ДАНИЛОВ фотоÿкерчĕкĕ.

ПУЛТАРУЛЛĂ РУКОВОДИТЕЛЬ

1941 çул. Çуллахи хĕвеллĕ ир бригадир Василий Зайцев колхоз правленине кайма тухнă. Çул çинче ăна ялсовет дежурнăйĕ тĕл пулнă.

— Василий Васильч,—тенĕ вăл, — сана сире повестка пур...

Зайцев юлташ повесткăна илнĕ те сасăпах вулама тытăннă: «Райвоенкомата, часе яма, ирхине 9 сехетре...»

— Аван, кĕтсех тăнăччĕ,—тенĕ вăл вуласа пĕтерсен. Вара, хирĕç пулнă çынпа сывпуллашса, татах утнă. Çак самантра вăл хăйĕн иртнĕ пурнăçне асаилнĕ, колхозри ĕççене тата хăйĕн бригадин ĕçĕсене хăвăрттăн тишкерсе тухнă, хăй вырăнне бригадир пулса ĕçлеме кама хăварасси çинчен, çемьене, тăванĕсемпе уйрăласси çинчен шутланă...

Колхозăн чапа тухнă уйĕç бригадирне — Василий Васильевич Зайцева фронта ăсатмашкăн ĕçрен пушă çынсем пурте пуханнă. Кашниех çак ырă кăмăллă, ĕçчен бригадира ырлăх-сывлăх суннă.

Униче хапхи патне çитсен, Василий Васильевич утсене чарма хушнă.

— Тăвансем, — тенĕ вăл ăсатакансем çине пăхса, хумханнă сасăпа. — Нимĕç пирĕн таса совет çĕре çине юнлă аттипе пусрĕ. пирĕн çине вăрă-хурахла, ултавлăн килсе тапăнчĕ. Пирĕн халăх нихăçан та нимĕç хурри пулман, пулас та çук. Нимĕçсене эпир ялан çĕнтернĕ...

— Çĕнтерсе, ыррăн-сыввăн таврăн!

— Аяк пĕрчине çĕмĕр иртĕхнĕ нимĕçсенне...

Çапла пилленĕ ватăсем фронта каякан бригадира.

* * *

Василий Зайцев çапăçăва пирвайхи хут 1941 çулхи август уйăхĕнче кĕнĕ. Хăйĕн вăйне, пурнăçне шеллемесĕр çапăçнă вăл нимĕç вăрă-хурахĕсене хирĕç.

Анчах питех те хаяр çапăçура йывăр суранланни ăна малалла çапăçма май паман. Вара вăл тăван колхоза таврăннă. Таврăнсанах Зайцева колхозниксем колхоз председателĕ пулма суйланă.

Хĕле кĕнĕ пулсан та, колхоз уйхирĕсенче çапман çĕмелсем карти-картипе ларнă. Сывăхри «Марс» колхоз çуракине те тахçанах хатĕрленсе çитнĕ ĕнтĕ. Кунта ак вăрлăхне те çапман. Выльăх апачĕ çук.

Акă мĕнле колхоза ертсе пыма пуçланă Зайцев.

— Авăн çапассинчен тытăнмалла, — çирĕппĕн татса каланă çĕнĕ председатель. — Вара вăрлăх та, выльăх апачĕ те пулĕ...

Мĕнпур ĕç те — çынсене мобилизацилессинче. Унччен председатель, ĕçке ярăнса, ялхуçалăхĕнчи ĕççене кая хăварнă. Çапман капансем хĕл варринче итемре ларнине Аслă Пăла Тимешĕн çыннисем астумаççĕ. Халь ак, пăх та нур...

* * *

Зайцев юлташ, актив пулăшнипе, пĕтĕм ĕçе фронт ыйтнă пек йĕркелесе янă.

— Вăрçă кунĕсенче, ик-виçĕ хут лайăхрах ĕçлемелле. Унсăрăн тырпул туса илме йывăр, мĕншĕн тесен колхозра ĕç вăйĕ вăрçăччен хиничен сахалтарах, — тенĕ вăл колхозниксене, ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеме чĕнсе.

Председатель калани колхозниксемшĕн яланах закон пулса тăрать. Вĕсем колхозра тимлĕрех ĕçлеме пуçланă. 1942 çулта вара Зайцев юлташ ертсе пыракан колхоз çуракине ăнăçлăн ирттернĕ, тухăçлă тырпул туса илнĕ.

Иртнĕ çул колхоз çĕнĕ çитĕнÿсем тунипе паллă пулса тăрать. Иртнĕ çулхи пек тухăçлă тырпул туса илни нихăçан та пулман. Вăтам шутпа кашни гектартан ыраш — 17 центнер, тулă — 16 центнер, сĕлĕ—14 центнер туса илнĕ. Республикăра чи мала тухса, ВКП(б) Обкомĕпе Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне илме тивĕçлĕ пулнă.

Мĕнле майпа тунă-ха çак çитĕнĕве Тимешсем?

Кунта колхозри ĕççене майне пĕлсе туса пыраççĕ. Ыншăпа мар, пĕлÿлĕхпе, мастерлăхпа! Çак мелсене Зайцев юлташ фронтри пек хастарлăхпа пурнăçа кĕртет. Вăрçăччен хипе танлаштарсан, колхозра ĕç вăйĕ икĕ хут сахалтарах. Анчах та колхоз 1943 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсене, 1940 çулхипе танлаштарсан, пĕр уйăх маларах—авăн çапас ĕçе октябрĕн 10-мĕшĕнче, государствăна тырă парас ĕçе —сентябрĕн 24-мĕшĕнче пурнăçланă.

Çитес çуракинче акмалли çĕр лаптăкне—510 гектар çине пĕтĕмпех кĕрхи çĕртме туса хăварнă. Демидовпа Скрипкин колхозниксем суха тунă чухне нормăна 150-шар процент тултарса ĕçленĕ. Агриппина Табакова, Ксения Викторова, Матрена Скрипкина стахановкăсен ячĕсем колхозра пуриншĕн те паллă. Колхозри пĕтĕм ĕçсем вĕсен ячĕсемпе çыхăнса тăраççĕ. Вĕсем иртнĕ çул кашниех 290—300-шер ĕçкунĕ тунă, 10—12-шер центнер тĕштырă илнĕ, государствăна та тырă чылай сутнă.

Хăшпĕр колхоз руководителĕсем часчасах: «халь вăрçă пырать, колхозра строительство ĕçне тума йывăр», теме пăхаççĕ. Ун пек калаçусене Зайцев юлташ ĕненмест.

— Ĕçе, тăвас тесе тытăнсан, кирек мĕнле пулсан та тума пулатех.—тет вăл.

Зайцев юлташ тăрăшнипе Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри платниксем: В. Шагаев, М. Хлебников, Н. Лабыков юлташсем пĕр уйăх хушшинче 40 тиха вырнаçмалăх, 60 пăру вырнаçмалăх çĕнĕ витесем туса лартнă.

Пултаруллă çынсен ĕçне ялан тивĕçлипе хаклаççĕ. Колхоза лайăх ертсе пынăшăн тата вăйлă тырпул туса илнĕшĕн Зайцев юлташа Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотине панă.

Сталин юлташ хăйĕн 1943 çулхи ноябрĕн 6-мĕшĕнче тунă историллĕ докладĕнче колхозниксен паха ĕçне пысăка хурса хаклани кашни колхозникăн чĕрине савăнтарчĕ, кашни çынăн чĕрине çĕнĕ туйăм, патриотизмлă туйăм кĕртрĕ.

Кашни патриот чĕринче Тăван çĕршывпа фронт умĕнче пысăк ĕç тăвас кăмăл çуралнă. Çак туйăмпа пулса иртнĕ Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз членĕсен пухăвĕ. Колхозниксем государствăна кооператив урлă 11.450 пăт тырă сутнă. Кашни колхозник хăй перекетленĕ тупăшран 20—40-шер пăт сутнă. Колхоз председателĕ фронтовик-коммунист Василий Васильевич Зайцев государствăна 117 пăт тырă сутнă.

Колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана ирттерсе тултарнă. Выльăх-чĕрлĕх продуктивноçĕ те ÿссех пырать.

Акă мĕншĕн панă Зайцев юлташ ертсе пыракан колхоза Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне!

Тивĕçлĕ награда. Халĕ колхозниксем хăйсен колхозĕн чыспе татах та çĕклессишĕн, Хĕрлĕ ялава кăçал та хăйсен аллинчех хăварассишĕн çĕнĕ вăйпа кĕрешеççĕ. Колхозра çуракине хатĕрлес тĕлĕшпе хĕрÿллĕ ĕçсем пыраççĕ. Ку таранччен тунă ĕçсем: вăрлăхсене сортласа пĕтерни, ялхуçалăх машинисене пĕтĕмпех юсаса лартни, лашасене лайăх пăхса усрани тата ытти нумай ĕçсем—Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз колхозникĕсем кăçал татах та лайăхрах ĕçлессине шанса тăма май пăраççĕ.

С. ШАДИН,
(Хамăр корр).
Елчĕк районĕ. Аслă Пăла Тимешĕ.

Ют çĕршывсенче

ИТАЛИРИ ВАРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, февралĕн 14-мĕшĕ (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй ставки çапла пĕлтерет: Анцио патĕнче американецсен 5-мĕш армийĕнчи акăлчансен чаçĕсем тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă. 5-мĕш арми тĕп фронтĕнче американецсен чаçĕсем çаплах Кассино районĕнче хĕссе пынă. Ытти участоксенче разведка тăвакан чаçсем активлă кĕрешнĕ.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн автотранспортне тата пĕр çĕре пуханса тăнă çарĕсене атакăланă.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, февралĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, февралĕн 13-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле акăлчансен бомбардировочнăй авиацийĕн самолечĕсем Кăнтăр Францири тата Хĕвеланăç Германири тĕрлĕ объектсене атакăланă. Февралĕн 12-мĕшĕнче кăнтăрла Çурçĕр Францири тата Бискай заливĕнчи çар объекчĕсене тапăннă чухне союзниксен самолечĕсем тăшманăн 5 самолетне пĕтерсе тăкнă. Англи авиацийĕн пĕр самолет пĕтнĕ.

СТОКГОЛЬМ, февралĕн 14-мĕшĕ (ТАСС). Шведсен «Афтонтиднинген» ятлă хаçачĕ çапла пĕлтерет: союзниксен авиацийĕ февралĕн 12-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Берлина тапăннă чухне 4 тоннăна яхăн таякан пĕр бомба Александерштрассе районĕнчи казармăсем çине ÿкнĕ. Çавăнта пин çын ытла вилнĕ. Çарсем казармăран пур çинелле те 2 километр таран карса илнĕ, халăха кĕртмеççĕ.

ЛОНДОН, февралĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, февралĕн 14-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Германи самолечĕсем кĕске вăхăт хушши Лондон районне тапăннă. Темиçе тĕлте фугаслă тата вут тивертсе яракан бомбăсем пăрахнă.

АНГЛИ ХАÇАЧĔ ЮГОСЛАВИРИ ХАЛĂХА ИРĔКЕ КĂЛАРАССИШĔН КĔРЕШЕКЕН ÇАРĂН ПАТТĂРЛĂХĔ ÇИНЧЕН

ЛОНДОН, февралĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх, «Таймс» хаçат ятарласа çырнă статьяра Тито армийĕн паттăр çарĕсене тивĕçлипе мухтать.

Югославири партизансем кĕрешни çинчен çĕнĕ хыпарсем килсе тăнăçсерĕн, тесе çырать хаçат, малта пыракан этемлĕх Тито генерал ертсе пыракан патриотсен хастарлă çапăçăвĕпе ытларах та ытларах хавасланать. Нимĕçсен питĕ лайăх хĕçпăшалланнă армийĕн Югославири патриотсен çарĕсемпе питĕ хаяр çапăçма тивет. Çак патриотсем вăй пĕтсе çитиччен хăйсен позицийĕсенче çирĕп тăраççĕ. Хăйсенчен вăйлăрах çарпа çапăçмалла пулсан, вĕсем каялла чакаççĕ, анчах та вăй илсе çитерсенех тăшмана çĕнĕрен тапăнаççĕ те ăна хăй тытса илнĕ территорирен хăваласа яраççĕ.

БЕЛОРУССИ ПАРТИЗАНĔСЕМ ГИТЛЕР ГЕНЕРАЛНЕ ГАРТЕНШТЕЙНА ВĔЛЕРНĔ

СТОКГОЛЬМ, февралĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Шведсен «Афтонтиднинген» ятлă хаçачĕ çапла пĕлтерет: пĕр çапăçура Белорусси партизанĕсем СС çарĕсен генерал-майорне Вильгельм Гартенштейна амантнă пулнă. Çав сурансене пула Гартенштейн генерал вилнĕ. Ку ĕнтĕ çак юлашки икĕ эрне хушшинче вĕлернĕ нимĕç генералĕсенчен тăваттăмĕшĕ пулса тăрать.

КĔСКЕН

- Рузвельт конгреса 34.000 миля тăршшĕне çити шоссе çулĕсем тăвас программăна пурнăçламалли сĕнÿ тăратнă. Строительствăн хакĕ çулталăкра 75 миллион доллара çити пулмалла. Программа темиçе çул хушшинче пурнăçа кĕмелле. (ТАСС).
- Нумаях пулмасть, Яссы хулинче (Румыния) 36 румына суд тунă. Вĕсене пурне те правительствăна хирĕç ĕçленĕшĕн айăпланă. Айăпланакансенчен пĕрне асаплантарса вĕлермелле тунă, ыттисене—нумай вăхăта тĕрмене хупса лартмалла тунă.
- Февралĕн 10-мĕшĕнче Турцире Анкара, Стамбул хулисенче тата ытти чылай хуласенче те каллех çĕр чĕтренĕ. Ку хутра çынсем вилни е аманни пулман, ишĕлÿсем те пулман.

Пĕлтерÿ

Ыран, февралĕн 17-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, Пионерсен çуртĕнче (ДКА, пулнă çуртра) агитколлективсене ертсе пыракансем, докладчиксем тата беседчиксем валли инструкциллĕ доклад пулать. Доклад теми: «Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарни».

Докладчик—Политотделăн старши инструкторĕ лейтенант И. П. Петров.

ВКП(б) горкомĕн парткабинечĕ

Ответлă редакторшăн
П. Т. ЗОЛОТОВ.

УГМС-н Шупашкарти гидрометстанцийĕ вырăнти çынсене техник-гидролог пулма вĕрентмешкĕн курс уçать. Курсра 5 уйăх вĕренмелле. Курсантсене стипенди параççĕ. Курса илмелли условисем çинчен куллен 4—33 номер телефон тăрăх тата çак адреспа ыйтса пĕлмелле: г. Чебоксары, ул. Освода, 5.

Гидрометстанци.

РЕДАКЦИ АДРЕСЕ: г. Чебоксары, ул Володарского. 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторан — 0—67, секретарьпе заместителĕн — 4—26, парти пурнăс пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00036 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59Х42 п. л. Тираж 14.400 экз